К.В. Иванов алçырăвĕсенчен // Илемлĕ литература. – 1941. – Кн. 2. – С. 23-26; Чăваш коммунĕ. – 1940. – 1 юпа.

*Н. ДАНИЛОВ.*

# К. В. ИВАНОВĂН ЛИТЕРАТУРĂЛЛА НАСЛЕДСТВИ

Юбилей кунĕсем тĕлне К. В. Ивановăн сборникĕ пичетленсе тухрĕ. Вилĕмсĕр „Нарспи" поэмăран пуçне кунта унăн „Тимĕр тылă", „Тăлăх арăм", „Икĕ хĕр" ятлă виçĕ халлапĕ, „Шуйттан чури" ятлă трагеди сыпăкĕсем, „Хальхи самана", „Выçă аптранăскерсем", „Усал шăрăх", „Ватă вăрман шухăшĕ", „Кĕркунне", „Чĕкеç" ятла сăввисем пичетленнĕ. Оригиналлă произведенийĕсенчен пуçне ку сборнике М. Ю. Лермонтовăн, Н. А. Некрасовăн, А. В. Кольцовăн—пурĕ 12 произведенийĕсене чăвашла куçарнисем кĕнĕ. Кунсăр пуçне тата ик-виçĕ произведени ача-пăча валли куçарни.

Анчах та ку произведенисем—К. В. Ивановăн ĕçĕн пĕр пайĕ кăна. Çитменне тата—пысăках та мар пайĕ çеç темелле. Чăннипе, калама çук ĕçчен, шутсăр нумай çырнă поэтăн литературăллă наследстви çак кĕнекене кĕнĕ произведенисенчен тата чылай хут пысăк пулнă пулмалла.

„Çырнă япалисем нумайччĕ пиччен, пĕр чылаях пысăк арчаччĕ,—тесе каласа кăтартать Мария Васильевна.—Арчин тăршшĕ пĕр виçĕ шит ытла, урлăшĕпе çӳллĕшĕ икĕ шите яхăнччĕ... Пьесăсем нумайччĕ... Пĕр тетрадĕнче чӳк кĕллисене çырса илнисем пурччĕ. Вĕсене вăл Кайраклăри Макçăм старикрен çырса илнĕччĕ пулас. Асаннерен те çапла: ĕлĕкхи пурнăç çинчен каласа пар-ха, тесе ыйта-ыйта пĕлсе çырнисем чылайччĕ".

Мария Васильевна сăмахне унăн юлташĕ Мария Даниловна Ковалева çирĕплетсе парать. К. В. Ивановăн тепĕр йăмăкĕ Пераскева Васильевна пиччĕшĕн алçырăвĕсем нумай пулни çинчен кăçал август уйăхĕнче мана çапла каласа кăтартрĕ:

„Константин Васильевич алçырăвĕсенчен пирĕн алăра халĕ нимĕн те çук. Вĕсенчен пĕр пайне граждан вăрçи вăхăтĕнче пирĕн киле темле салтаксем кĕрсе илсе тухса кайнă. Килте вăл вăхăтра анне кăна пуранна. Вăл калана тăрăх, салтаксем ытти япаласене ним те тивмен, шкафсемпе сĕтел сунтăхне уçса, тĕрлĕ хутсене кăна пĕр çĕклем илсе тухса кайнă.

Алçырусен тепĕр пайне 1920-мĕш çулсенче Уфари педтехникум преподавателĕсене парса янă.

Виççĕмĕш пайне 1925—26 çулсенче хам Саратоври университетра вĕреннĕ чухне эпĕ медрабфакра вĕренекен пĕр Сергеев ятлă студента каникула килне, Чăваш республикине кайнă чухне Шупашкара парса ярсаттăм. Каникултан таврăнсан, вăл вĕсене Захарова патăм, тесе каларĕ.

Ку ушкӑнта ҫапла алсырусем пуррине астӑватӑп: 1) „Нарспи" поэмӑн те черновикӗсем, те варианчӗсем,—татӑклӑн калаймастӑп: вӗсене листан саккӑрмӗш пайӗ пысӑккӗш хутсем ҫине хура карандашпа питӗ вак почеркпа ҫырнӑччӗ: пурӗ миҫе листа пулнине астумастӑп; 2) „Пӗчӗк Унеҫ" ятлӑ поэма сыпӑкӗсем; 3) „Ӗҫҫынни" ятла сӑвӑ: ку сӑвӑ ҫапла сӑмахсемпе вӗҫленетчӗ:

„Анчах паян, тӑванӑм,
Ҫӑкӑр лекни ҫӑварна?"

4) „Шуйттан чури" ятлӑ вӗҫленмен поэма; 5) унтах тата „Песнь песней" куҫарнӑ пысӑк, ҫур листа формиллӗ тетрадь те пурччӗ пулас".

Ҫапла ӗнтӗ, Пераскева Васильевна каланӑ тӑрӑх та, К. В. Ивановӑн е ҫырса йӑлтах хатӗрлесе ҫитернӗ, е ҫырса пӗтереймен произведенийӗсем тата та нумай пулни уҫҫӑнах курӑнса тӑрать. Анчах, Покровский „шкулӗпе" пӑтранса кайнӑ этемсем, халӑхӑн чи юратакан поэтне тӗрлӗрен майпа лапӑртаса путарма тӑрӑшса, Иванов произведенийӗсене ҫине тӑрса шыраса пухас ӗҫе юлашки ҫулччен чарса тӑчӗҫ. Ҫакна пула та аслӑ поэтӑн питӗ нумай произведенийӗсем ҫухалса пӗтрӗҫ.

Сӑмахран, К. В. Ивановӑн Ухсай Яккӑвӗ ҫырса пӗлтернӗ пӗр дневникӗнчен пуҫне тата тепӗр дневникне, 1906 ҫулта кӗркунне ҫырнӑскерне, Белебейри педучилище преподавателӗ С. Н. Герасимов пулӑшнипе кӑҫал тин шыраса тупма тӳрӗ килчӗ. К. В. Ивановӑн ҫак дневникӗнчи ҫӗнӗ произведенисемпе халӑха поэт вилнӗ хыҫҫӑн 25 ҫул иртсен тин паллаштарма май пулчӗ.

Анчах ӗҫ—К. В. Иванов произведенийӗсен шутӗнче кӑна мар. Ӗҫӗн чи хаклӑ енӗ вӑл—аслӑ поэтӑн пысӑк ӑс-тӑнӗпе хӗрӳ чӗринчен шӑранса тухнӑ произведенисем пур халӑхсемшӗн те пысӑк пуянлӑх пулса тӑнинче. Вӗсем Социализмлӑ аслӑ революцичченех-ха чуралӑх самани мӗн тери тертлӗ, йывӑр, сӗмтӗттӗм пулнӑ пулин те, хӑйсен пысӑк пахалӑхне пула тӑван халӑх хушшине кӗрсе сарӑлма ҫулйӗр тупнӑ-тупнах. Чӑваш халӑхӗ вӗсене вуласа, патша пусмӑрӗпе тӗттӗмлӗхне хирӗҫ кӗрешме вӑй-хӑват илсе тӑнӑ; кӗрешсен, телейлӗ ҫутӑ пурнӑҫ ҫӗнсе илессе вӗсем хыттӑн шантарса тӑнӑ.

Ҫапах та революциччен К. В. Иванов произведенийӗсем халӑх хушшине кӑштшарӑн, вак-тӗвекӗн ҫеҫ сарӑлма пултарнӑ. Вӗсене нумайран теҫеткешер, ҫӗршер ҫын кӑна аран-аран вулама пултарнӑ. Социализмлӑ революци кӑна К. В. Ивановӑн пуян наследствине халӑхсем хушшине сарӑлма ҫул такӑрлатса пачӗ. Революци хыҫҫӑн пӗр „Нарспи" кӑна ӗнтӗ ултӑ хутчен пиншер экземплярпа пичетленсе тухса саланма ӗлкӗрчӗ. Ҫийӗнчен тата ӑна виҫӗ хут вырӑсла куҫарчӗҫ. Вырӑс халӑхӗнчен пуҫне ӑна кӑҫал тутарсем те, пушкӑртсем те, ирҫесем те, марисем те, удмуртсем те хӑйсен тӑван чӗлхипе вулама пултараҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ Ленинпа Сталинӑн наци политикине пула Совет ҫӗршывӗнчи пур халӑхсем те, пӗр-пӗрин творчествӑллӑ пуянлӑхӗпе усӑ курса, тӑванланнӑҫем тӑванланса пыраҫҫӗ.

## К. В. ИВАНОВ АЛҪЫРӐВЁСЕНЧЕН

### Кӗҫтентин

Кӗҫтентин (Михетер ывӑлӗ) ашшӗпе ултӑ ҫулта чухне Устим ялӗнчен тарса килнӗ. Вӑл ашшӗнчен 33 ҫулта юлнӑ. 17 ҫулта ӑна авлантарнӑ. Арӑмӗ Наташ ятлӑ пулнӑ. Авлансан тепӗр ҫул унӑн хӗр (Василиса) ҫуралнӑ.

*16 августа 1906 год.*

### *ПӐРТТА АЧИПЧИ*

### Кашкӑрсем

Пирӗн ратне ашшӗ Кашкӑр пулнӑ. Вӑл тӗне кӗмен чӑваш. Унӑн икӗ ывӑл юлни паллӑ: пӗри Кашкӑр Иванӗ, тепри Кашкӑр Куҫми. Иванин йӑхӗнчен юлнисене „Пӑртта ачипчи" теҫҫӗ, Куҫминне „Куҫма ачипчи". Кашкӑр хӑй ӑҫтан килнине те пит аванах пӗлекен ҫук. Ваттисем Пелепейрен, вырӑссем килсе тулсан, саланнӑ теҫҫӗ. Ӗлӗк пирӗн ял вырӑнӗнче вӑрман анчах пулнӑ, унта кашкӑрсем пит нумай ҫӳренӗ. Пирӗн асатте те хамӑр ял тӗлти вӑрмана килсе ларнӑ та кашкӑр тытса пурӑннӑ. Ҫавӑнпа ӑна **Кашкӑр** тенӗ, теҫҫӗ. Кашкӑр хӑй мӗнле вилни те паллӑ мар. Ун ывӑлӗ Куҫминчен юлнӑ йӑх Пӑрттасем пекех нумай, усал, ҫмил мар. Мӗншӗн вӑл апла? Кашкӑр Иванӗн арӑмӗ Пӑртта пулнӑ. Пӑртта пек хастар арӑм ялта пулман. Пӗтӗм яла вӑл хӑй аллинче тытнӑ. Пурте ун умӗнче чӗтресе тӑнӑ. Хуть кама та кастарас тесен кастарнӑ, кастармасан илсе кӗрсе ӗҫтерет-ҫитерет те кӑларать те ярать. Унӑн пилӗк ывӑл пулнӑ: Ванюшке, Ҫтапан, Симун, Пӗрчче, Хветут. Юлашки ыв. Хветучӗ тимӗрҫӗрен пулнӑскер... Хветут Вӑрӑм-Ухтерене сӑра ӗҫме чӗнме каять: „Пӑртта патне пӑртлаттарса, Ванюшке патне вашлаттарса, Симун патне сиктерсе". Вӑрӑм-Ухтерен[1] калать: Ачамача-а-ам! Эсӗ тимӗрҫӗ ывӑлӗ иккен! Пӑртта ывӑлӗсене те питех ирӗк паман. Ҫилли килсен ҫаптарнӑ, ҫилӗ ҫук чух темтепӗр илсе ҫитернӗ, ачашланӑ. Ҫапла пулнӑ вӑл Пӑртта карчӑк.

Ҫавӑнпа унӑн йӑхӗ те ҫавӑн пекех пулнӑ: хастар, ҫмил, усал, ырӑ.

Манӑн тӳрӗ асаттесем ак ҫаксем: Кашкӑртан Кашкӑр Иванӗ, Кашк. Ив.—Симун, Симунтан—Никулай писӗр, Никулай писӗр-

[1] Вӑрӑм-Ухтерен—пуян старик пулнӑ. Вӑл Хушӑлкасен ҫӗрне илсе пурӑннӑ. Халь те пулсан Хушӑлка ҫӗрӗнче Ухтерен ҫӑлӗ текен ҫӑл пур.

тен—Ваçинка-пуян, Ваçинкаран—эпĕ, Кĕçтук. Тепĕр паллă: Кашкăр Ив. ывăлин Ванюшкен ывăлĕ Никандр пулнă. Вăл халь те пурăнать. Вăл—эрех çăварĕ. Нумай та пулмасть-ха ак вăл хăйне фотографияра ўкерттернĕ: хăй ларать, çумĕнче кулаç, аллинче эрехлĕ кĕленче. Çапла çын Пăртта асаннен ачипчи. Кашкăр ратни халĕ çур яла яхăн пур. Унтан кĕçĕнрех ратне ялта—„Хураç“.

**ХАМ ПĔЛНИ ТĂРĂХ:**

ПĂРТТА
↓

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Ванюшке | Çтапан | Симун | Пĕрчче | Хветут |
| ↓ | ↓ | ↓ | ↓ | ↓ |
| Никандр | Кавĕрле | Никулай | Якунне | Тимка |
| | ↓ | ↓ | | ↓ |
| | Кĕркури | Ваçинка | | Клав..[1] |
| | | ↓ | | |
| | | Кĕçтук. | | |

20 августа 1906 г.

## Пăртта-карчăк

Хĕлле Ванюшкене салтака каймалла пулнă. Салтака пама Ĕпхĕве каймалла пулнă. Ванюшкене ăсатма ашшĕпе амăшĕ кайнă. Ванюшке ун чух 18 çулта пулнă. Ун, шухскерĕн, салтака каясси килмен пит. Ун чух ахаль те вăрçă пуçланать тие пуçланă. Вăрçă хăрушă япала. Кĕсем Ĕпхĕве çитнĕ те пĕр хăна килне кĕнĕ. Хăна килĕ вырăссем-пĕлĕшсем пулнă. Пăхăнсан, Ванюшкене чĕнчĕç. Ку пĕлĕшсем Пăрттана Ванюшкенĕн ашшĕ кайтăр тее пуçланă, Пăртта Ивана ярасшăн мар: ватă вăл, вăйĕ çук, килте ман ывăлсем тата та нумай-ха, Ван-кесĕр пуçне те, тенĕ. Ыран каяс тенĕ чухне хайхи пĕлĕшсем Ванюшкене кантăр çурăмĕсем айне пытарнă та хунă. Тепĕр кун шыраççĕ-шыраççĕ. В.—çук! Вара Пăртта старикине панă та янă. Ашшĕне илсе кайсан Ванюшке тухнă кантăр ăшĕнчен. Киле таврăннă чух Пăртта хĕне-хĕне таврăннă ăна. „Эс пĕтертĕн аçăна, эс пĕтертĕн, ак сана, ак сана!“ Иван старике вăрçах илсе кайнă. Вăл вара, вăйсăрскер, çул çинчех пĕтнĕ. Ванюшкене савăнăç! Çапла пулнă пирĕн Пăртта асанне! Халь те пулсан Пăртта ачипчисем вăйя тухсан парăн-парăн сикнĕ чух: „Пăртта патне пăртлаттарса, Ванюшке патне вашлаттарса, Симун патне сиктерсе“ тесе такмакласа сикеççĕ.—

## Тема № 1.

Умĕнхи сăмах.

I

Михетер.
Кĕçтентин.

[1] Сăмах вĕçĕ паллă мар.

II

5. Кашкăр.
6. Иван.
7. Пăртта-карчăк.
8. Пăртта ачипчисем.

Ешĕл вăрман айкипе
Çырма юхать кĕрлесе.
Хĕвел çути шывĕпе
Вылять тĕрĕ тĕрлесе.

Таса çырма ăшĕнче
Кăвак пĕлĕт явăнать.
Мĕнпур, мĕн пур çут тĕнче
Ташлать, сикет, савăнать.

*К. Иванов.*

На 1906—7 уч. г.

1. Эрех, комедия в одном действии 600 (в стихах)
2. Йăвăр çул, трагедия в двух действ. (в стихах)
3. Ялти ĕçсем. Случай из дерев. жизни.
4. Йăвăр çул, семейные соб. 1906 г.
5. Икĕ ăру, родословные записи.

## Лето 1906 года

1. Это было в начале мая. Я возвращался домой на каникулы. Со станции я домой пошел пешком. Уже был полдень, я подходил к родному селу...

2. Оказалось, что сосватали дочку нашего богатого лавочника. Пригласили на свадьбу и нас, как близких родственников.

Я с нетерпением ждал троицу, на которой должна быть наша свадьба. За неделю до свадьбы стали приготовляться к ней: заказывать новые одежды, убирать комнаты...

На другой день рано утром меня разбудили. Я оделся и с довольным чувством, что я тоже „пуса каччи", побежал на свадьбу. Я вошел в избу. В это время невеста уже кончала „прощание". Прощание состоит в том, что невеста целовала по-порядку всех, начиная с родителей, и означает, что она оставляет свое девичество и переходит к замужнему положению.

### СЕЛО СЛАКБАШ

**План**

1. Местоположение.
2. Село.
2. Жители и их занятия.
3. Занятия.

# Изложение.

Село Слакбаш лежит у подошвы довольно высокой горы. Под самой горой протекает река Слак, от чего село и получило свое название. Против горы на другой стороне от села, верстах в двух проходит чугунка, с третьей стороны к востоку видны леса. Посредине села, в центре большой площади, стоит высокая новая церковь. Против церкви сельская школа, а к (*темиçе сăмах паллă мар*). На площади в каждый понедельник происходит базар. Постройки в селе, большая часть, сгнившие и пошатнувшиеся, а в центре села, вокруг церкви постройки получше. Жители села исключительно чуваши. Занимаются земледелием и другое занятие составляет плетение лаптей.

**Пăртта карчăк**

1. Белебей хули (Çĕр вăтăр çул ĕлĕк).
2. Кашкăр. Пурăнăç.
3. Пукача.[1] Пуп.
4. Слак çинче. Вăрăм-Ухтерен.
5. Вырăссем. Ванюшке.
6. Ĕпхӳре мĕн пулни, мĕн курни.
7. Килте. Пурăнăç.
8. Халĕ.

**ЧУН ТАТĂКĔ**

в) 1. Чун татăкĕ.
2. Амăшĕ.
3. Ашшĕ.
4. Паянхи кун.
5. Хура пĕлĕт, хĕрлĕ вут.
7. Кайран.

Виçĕ ухмах пĕр тăван
Çӳрет пасар вэрринче.

Халлап пĕтрĕ... чарăнас.

Мăнтарăн та çынччĕ-çке,
Мăнтарăн та ыр курас
Чухне чăваш пĕтрĕ-çке!
Халлап пĕтрĕ... чарăнас!

*К. Иванов*

---

[1] Пугачев.